**Кăмпара**

Пирĕн ял хĕрринче вăрман пур. Эпир унта çырла татма та чечек пуçтарма çӳретпĕр.

Пĕрре анне пире, Çерукпа иксĕмĕре, кăмпа пуçтарма ячĕ. Эпир кунтăксене илтĕмĕр те тухса кайрăмăр.

Вăрманта кăмпа пит нумай. Чи хитрисене пуçтарам-ха тесе, эпĕ юри хĕрлĕ кăмпа шыраса çӳретĕп.

Ытла та чечен вĕсем, ачаш, тунисем шап-шурă, çиелте, юри илемлетнĕ пек, шурă-шурă пăнчăсем палăраççĕ.

— Эх, анне савăнать те ĕнтĕ, — тесе тăрăшса та васкаса пуçтаратăп. Пуçтартăм-пуçтартăм та — кунтăкăм тулчĕ кайрĕ.

Çерук та тăрăшса пуçтарчĕ. Анчах унăн кăмписем вĕтĕ.

Эсĕ пит пĕчĕккисене татнă-çке? — терĕм ăна эпĕ.

Мана юрать, эпĕ хам та санран пĕчçкрех-ха,— терĕ вăл.

Кăнтăрла çитеспе киле таврăнтăмăр. Анне пире хĕпĕртесе кĕтсе илчĕ. Çерук кăмписене курсан:

— Ах, епле лайăх кăмпасем тупнă эсир, тесе савăнчĕ вăл.

— Манăн тата лайăхрах! — хама мухтасса кĕтрĕм эпĕ. Çавăнтах кунтăкăма уçса кăтартрăм.

— Ку тата мĕскерле япала? — тесе ыйтрĕ анне.

— Хитре-им? — тесе куçран пăхрăм ăна.

— Хитрине хитре те, шăна кăмпи вăл, çиме юрăхсăр, — терĕ анне.

«Епле апла çиме юрăхсăр пултăр-ха, ара, кăмпа мар-им вăл?»— тесе шухăшлăрам эпĕ. Вара каярахпа тин асăма илтĕм: пĕрре çапла, çавăн пек кăмпа çисе, пирĕн чĕпсем вилнĕччĕ.

Мĕн тăвас ĕнтĕ унпа? — терĕм эпĕ.

— Кайса пăрах çырмана, çĕре чавса чиксен те аван, — терĕ анне.

*Илпек, М. Кăмпара : [калав] / М. Илпек // Чăваш литературин*

*антологийĕ. — Шупашкар, 2015. — [Т. 4] : Ача-пăча валли çырнă хайлавсем. — С. 148.*